28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 ИЮНЬ 13 ЮНКУН 113 (484) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Информациллĕ пĕлтерӳ

1945 çулхи июнĕн 11—12-мĕшĕсенче ВКП(б) Чăваш Обкомĕн XXII-мĕш пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум çак ыйтусене сӳтсе-яврĕ:

1. Çураки итогĕсем, тырпула пăхса çитĕнтересси, тырпул пухса кĕртме хатĕрленесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен.

Докладчик—ВКП(б) Обкомĕн пĕрремĕш Секретарĕ ЧАРЫКОВ юлташ.

2. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн «Колхозсемпе совхозсенче 1945 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планĕ çинчен» йышăннă постановленине мĕнле пурнăçласа пыни çинчен.

Докладчик—Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ МАТВЕЕВ юлташ.

3. Шкулсене 1945—46-мĕш вĕренӳ çулне хатĕрлесси çинчен.

Докладчик — Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссарĕ МАКАРОВ юлташ.

Пур ыйтусемпе те тивĕçлĕ решенисем йышăннă.

ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ ВКП(б) Обком Секретарĕн суту-илӳпе обществăллă апатлану енĕпе ĕçлекен Заместителĕ пулса ĕçлеме М. М. РОМАНОВА юлташа çирĕплетнĕ, М. А. КУЗЬМИН юлташа, вăл вĕренме кайнă пирки, çав ĕçрен хăтарнă.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Чăваш АССР Верховный Совечĕн IX-мĕш сессине пухасси çинчен

Чăваш АССР Верховный Совечĕн IX-мĕш сессине 1945 çулхи июлĕн 4-мĕшĕнче Шупашкар хулинче пухас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1945 çулхи июнĕн 11-мĕшĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Чăваш АССР Верховный Совечĕн Чăваш республики 25 çул тултарнă ятпа ирттермелли сессине пухасси çинчен

Чăваш АССР-ĕ 25 çул тултарнине палăртмашкăн Чăваш АССР Верховный Совечĕн юбилейлĕ сессине 1945 çулхи июлĕн 7-мĕшĕнче Шупашкар хулинче пухас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1945 çулхи июнĕн 11-мĕшĕ.

Президента Г. Трумэн господина

ШУРĂ ÇУРТ, ВАШИНГТОН

Агрессие хирĕç вăрçнă чухне пĕр-пĕрне пулăшса тăмалли принципсем çинчен калакан Килĕшĕве Совет Союзĕпе Америка алă пусни виçĕ çул тултарнă кун Совет Правительстви ячĕпе тата хамран Сире тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительствине тав тăватăп.

Çав Килĕшӳ тăрăх, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем Совет Союзне Европăра пынă пĕтĕм вăрçă тăрăхĕнче ленд-лиз йĕркипе хĕçпăшал, стратегиллĕ япаласем тата апат-çимĕç парса тăчĕç. Çавăнпа та вăл килĕшӳ самаях усăллă пулчĕ, пирĕн пĕр тăшмана—гитлерла Германие—хирĕç пыракан вăрçа ăнăçлăн пĕтерме чылай пулăшрĕ.

Совет Союзĕпе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем хушшинчи туслă çыхăнусем, пĕрле кĕрешнĕ вăхăтра çирĕпленнĕскерсем, малалла та ăнăçлăн вăйлăланса пырĕç, тесе эпĕ хытă шанса тăратăп. Пирĕн туслă çыхăнусем вăйланса пыни пирĕн халăхсене ырлăх парĕ, ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсене пĕр-пĕринпе çирĕппĕн килĕшсе ĕçлесе тăма пулăшĕ.

И. СТАЛИН.

Стеттиниус господина США-н государство секретарьне

САН-ФРАНЦИСКО

Агрессие хирĕç вăрçнă чухне пĕр-пĕрне пулăшса тăмалли принципсем çинчен калакан Килĕшĕве Совет Союзĕпе Америка алă пуснăранпа виç çул тултарнă май Сире ырă сунатăп.

Çак кун Эсир, хĕçпăшала тара е кивçен памалли программăна пурнăçа кĕртмелли Управление ертсе пыраканĕ пулса, Хĕрлĕ Çара хĕçпăшал, стратегиллĕ материалсем тата апат-çимĕç тăратас тĕлĕшпе çав тери нумай ĕç турăр. Çав пулăшăвăн анлăшĕ тата вăл ĕçе лайăх организациленни гитлерла Германие аркатса тăкас ĕçре пысăк вырăн йышăнчĕ.

Совет Союзĕпе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен халăхĕсемпе çарĕсем пĕрлешсе кĕрешни çирĕп мир тата пĕтĕм тĕнчери хăрушсăрлăх интересĕсемшĕн пирĕн çĕршывсем хушшинчи туслăха малалла та çирĕплетмелли лайăх условисем туса пачĕ.

В. МОЛОТОВ.

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ ИЮНĔН 10-мĕшĕ ТĔЛНЕ ÇУРАКИ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА (ПРОЦЕНТПА)

Районсем	Пĕтĕмпе акнă	Çав шутран					
		Çĕрулми	Пахча-çимĕç	Кантăр	Йĕтĕн	Махорка	Тымар-çимĕçпе силос культурисем
Вăрнар	104,5	100,7	56,6	98,0	102,6	3,7,	166,0
Шупашкар	103,1	100,0	81,0	86,0	—	—	93,5
Вăрмар	103,0	103,0	102,9	67,5	—	—	222,2
Муркаш	103,0	94,7	100,0	84,0	—	—	100,0
Сĕнтĕр	102,7	104,3	87,0	90,2	—	—	42,3
Сĕнтĕрвăрри	102,2	103,3	63,8	82,0	—	—	40,0
Куславкка	102,1	101,1	79,4	68,7	—	—	100,0
Шăхасан	102,0	100,5	100,0	82,8	—	—	102,5
Элĕк	101,9	100,1	105,0	78,1	—	—	85,9
Красноармейски	101,2	102,9	82,0	92,2	—	—	107,2
Иншей	100,9	101,7	82,6	71,7	—	—	64,1
Етĕрне	100,9	100,3	76,0	91,7	69,2	—	106,3
Чкаловски	100,8	76,6	92,2	62,2	—	—	92,0
Калинино	100,7	95,1	84,2	91,1	—	—	65,3
Октябрьски	100,6	101,3	70,9	65,8	—	—	71,1
Канаш	100,6	97,7	86,1	57,0	—	—	39,8
Советски	100,5	99,6	78,7	90,1	—	—	45,0
Комсомольски	100,4	86,7	72,6	77,0	—	—	83,0
Çĕрпӳ	100,4	102,1	63,8	76,2	—	—	93,0
Тăвай	100,2	92,6	102,6	78,8	—	18,0	85,1
Чурачăк	100,0	107,3	86,3	86,2	—	19,1	80,0
Шăмăршă	100,0	62,0	54,2	36,9	—	—	52,1
Хĕрлĕ Чутай	100,0	78,2	96,2	62,3	100,0	55,2	170,7
Кувакино	100,0	84,6	50,0	—	89,1	26,6	104,4
Первомайски	100,0	73,4	102,8	60,6	74,0	—	107,6
Сĕмĕрле	100,0	78,1	58,5	65,9	76,6	44,0	77,6
Елчĕк	100,0	98,2	65,6	95,3	—	—	81,0
Пăрачкав	96,8	83,7	20,0	—	71,1	15,4	—
Йĕпреç	92,1	50,6	35,0	66,6	53,3	11,6	111,1
Улатăр	85,1	30,2	12,5	—	42,9	43,4	27,4

Çураки итогĕсем, тырпула пăхса çитĕнтересси, тырпул пухса кĕртме хатĕрленесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ И. М. Чарьков юлташ ВКП(б) Обкомĕн XXII-мĕш Пленумĕнче тунă докладран

Совет Союзĕ фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç туса пынă Отечественнăй Аслă вăрçă çĕнтерӳпе вĕçленчĕ. Хĕрлĕ Çарпа пирĕн союзниксен çарĕсем гитлерла Германие чĕркуççи çине тăратрĕç. Германи хăйне çĕнтернĕ тесе йышăнчĕ тата пĕр сăмахсăрах парăнни çинчен пĕлтерчĕ.

Çав историллĕ çĕнтерӳсене тума Хĕрлĕ Çара пĕтĕм совет халăхĕ, вăя хĕрхенмесĕр, паттăррăн ĕçлесе, пулăшса пычĕ. Совет хресченĕсем хамăр Тăван çĕршывăн чыслăхĕпе ирĕклĕхĕшĕн тата никама пăхăнманлăхĕшĕн пынă кĕрешĕве питĕ пысăк вăй хучĕç. Халĕ ĕнтĕ, çĕнтерĕве аллă илнĕ хыççăн, эпир пĕтĕм чун-чĕрепе хамăрăн Тăван çĕршыва татах та хăватлăрах, чаплăрах тăвассишĕн тăрăшатпăр. Пирĕн хресченсем хамăрăн государствăна çавăн пек пĕтĕм чун-чĕререн юратни çурхи хĕрӳллĕ уйхир ĕçĕсем вăхăтĕнче уйрăмах уçăмлăн палăрчĕ.

ÇУРАКИ ИТОГĔСЕМ

Пирĕн республикăри колхозсемпе МТС-сем кăçалхи çуракине иртнĕ çулхисенчен чылай кал-каллăнрах тытăнчĕç. Вăрлăхсемпе машинăсене, инвентарьпе ĕç выльăхĕсене çураки валли вăхăтра хатĕрлесе çитерни, çынсене ĕçе тĕрĕс вырнаçтарса тухни тата вĕсем колхоз уйхирĕсенче вăя хĕрхенмесĕр ĕçлени кăçалхи çуракине, çуркунне вăраха юлса килчĕ пулсан та, кĕске срокрсенче тата нумай колхозсенче пахалăхлăн туса иртерме май пачĕç.

Ир акакан тĕштырăсене акмалли плана республика пĕлтĕрхинчен 10 кун маларах тултарчĕ. Июнĕн 7-мĕшĕ тĕлне вара эпир çуракин государство планне пĕтĕмĕшпех тултартăмăр. Вăрнар, Сĕнтĕр, Муркаш, Красноармейски тата Шăхасан районĕсенчи колхозсем çуракине уйрăмах кал-каллăн туса иртерчĕç.

Ялхуçалăх артелĕсенчен нумайĕшĕсем çур тыррисене 6—8 ĕç кунĕнче акса пĕтерчĕç. Çапла, сăмахран, Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ колхоз ир акакан тĕштырăсене 6 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ, мĕнпур тырпулсене сеялкăсемпе акнă, вăрлăхсене акиччен яровизациленĕ тата тĕрлĕ имçамсемпе сипленĕ, тăпрана лайăх ĕçлесе çемçетнĕ. Советски районри «Сеятель», Шăмăршă районĕнчи «Новая деревня», Шăхасан районĕнчи «Гвардеец» тата ытти нумай колхозсем акана агротехникăн чи лайăх срокĕсенче тата пахалăхлăн туса иртерчĕç. Çĕршер те пиншер колхозниксем, сухаçăсемпе акакансем тата сӳрелекенсем акара пысăк ĕç тухăçлăхĕн лайăх тĕслĕхĕсене кăтартса пачĕç. Кăçалхи çуракинче Чкаловски тата Шăмăршă районĕсенчи колхозсем чылай паллă çитĕнӳсем турĕç. Пĕлтĕр çав районсенчи колхозсем çуракине июнĕн 20-мĕшĕччен тăсса пынăччĕ, анчах çураки планне пур-пĕрех тултарайманччĕ. Кăçал Шăмăршă районĕ ирхи тĕштырăсене акмалли плана майăн 19-мĕшĕ тĕлне, Чкаловски район майăн 20-мĕшĕ тĕлне тултарчĕç, çуракин государство планне вара тепĕр 10—12 кунран пĕтĕмĕшпех пурнăçларĕç. Кунта коммунистсемпе комсомолецсем пĕтĕм ĕçе организацилекенсем пулчĕç, вĕсем мĕнпур колхозниксене хăйсем пример кăтартса пычĕç, акара социализмлă ăмăртăва лайăх йĕркелерĕç. Шăмăршăпа Чкаловски районсенчи колхозсем, çуракине ăнăçлăн туса иртерсе, хăйсем кая юлса пынине хăйсен вăйĕсемпех пĕтерме пултарнине уçăмлăн кăтартса пачĕç.

Çав вăхăтрах Çĕмĕрле, Хĕрлĕ Чутай, Первомайски, Йĕпреç, Кувакино, Пăрачкав тата Улатăр районĕсем çурхи уйхир ĕçĕсене тӳсме çук тăсса пычĕç. Çав районсен руководителĕсем ака срокĕсене кĕскетмелли майсемпе усă курма пултараймарĕç. Çуракине çав районсенче 2—3 кун каярах юлса тытăнчĕç. Тракторсемпе тата ĕç выльăхсемпе япăх усă курчĕç. Парти райкомĕсемпе райисполкомсем колхозниксем хушшинчи ĕç дисциплинине çирĕплетес тĕлĕшпе кирлĕ мерăсене йышăнмарĕç, бригадăсемпе звеносенче ĕçе тĕрĕс организацилеме тăрăшмарĕç. Суха тунă тата тырă акнă çĕрте питĕ çамрăк ачасем ĕçленĕ, çитĕннĕ арçынсем управлени аппарачĕсенче тата ялти ытти ĕçсенче ларнă. Хĕрарăмсем те ĕçе питĕ сахаллăн хутшăннă. Çавăн пирки ĕнтĕ унта ĕç тухăçлăхĕ пулман, ĕç пахалăхĕ çине япăх çавăрăнса пăхнă.

Пирĕн республика тĕштырăсемпе пăрçа йышши культурăсене акмалли плана 100,1 процент, вăл шутран пучахлă тырăсем акмалли плана 106,2 процент чухлĕ тултарчĕ. Анчах эпир çĕрулмипе пахча-çимĕçсем лартмалли, кантăрпа йĕтĕн культурисем, махорка, нумай çул хушши ӳсекен курăксем, тымар-çимĕçсемпе силос акмалли плансене паянхи куна çитсе те тултарман-ха. Çакă вăл, пуринчен малтан, нумай районсенчи парти райкомĕсемпе райисполкомсем тата çĕрĕç органĕсем техникăллă культурăсемпе выльăх апачĕ валли акакан культурăсене хакламаннинчен, суракин государство планне культурăсем тăрăх тултарас тесе тивĕçлĕ мерăсем йышăнманнинчен килнĕ.

Парти райкомĕсемпе райисполкомсем сывăх кунсенчех çĕрулми лартса пĕтерес, пахча-çимĕçсемпе махорка, кантăрпа йĕтĕн акса пĕтерес тĕлĕшпе, плана кашни колхоз тăрăх пĕр сăмахсăрах тултарас тĕлĕшпе пур тĕрлĕ мерăсене те йышăнма тивĕçлĕ.

Республикăри машинно-тракторнăй станцисем кăçалхи çул, иртнĕ çулсенчи пек мар, чылай лайăхрах ĕçлерĕç. Июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне вĕсем трактор ĕçĕсен çуркуннехи планне 108,3 процент чухлĕ тултарчĕç. Вăрнар МТС-ĕ çав вăхăт тĕлне трактор ĕçĕсен çуркуннехи планне 186,4 процент, Йĕпреç МТС-ĕ—152,2 процент, Куславкка МТС-ĕ—145 процент, Çĕрпӳ МТС-ĕ—142 процент, Канаш МТС-ĕ — 140,4 процент, Вăрмар МТС-ĕ—136,3 процент, Улатăр МТС-ĕ—127,8 процент, Елчĕк МТС-ĕ—123,8 процент тултарчĕç. Нумаях пулмасть çураки планĕсене Кувакино, Сурмайдан тата Сиява МТС-ĕсем те тултарчĕç.

Малта пыракан машинно-тракторнăй станцисен çуракинчи çитĕнĕвĕсем вĕсем тракторсен паркне, тракторсем çумне кăкарса ĕçлемелли инвентаре акана тĕплĕн хатĕрлесе çитернинчен, трактористсен кадрĕсене лайăх вĕрентсе хатĕрленинчен килнĕ. Малта пыракан МТС-сен руководителĕсем тракторсене пĕр чарăнмасăр ĕçлеттермелле тăвассишĕн çине тăрса тăрăшрĕç. Вĕсем çынсене тĕрĕс вырнаçтарса тухма, ĕç дисциплинине çирĕп тытса пыма, трактор бригадисене техника тĕлĕшĕнчен пăхса тăрас ĕçе лайăх йĕркелеме пултарчĕç. Малта пыракан пур МТС-сенче те тракторсен пĕтĕм хăвачĕпе туллин усă курасси çине тимлĕн çавăрăнса пăхаççĕ, ĕçре агрегатла меслетпе усă кураççĕ. Çакă вăл горючие перекетлеме те нумай пулăшать. Юлашкинчен, çуракине ăнăçлăн иртерес ĕçре политикăллă-массăллă ĕçе тĕрĕс организацилени те питĕ пысăк вырăн йышăнса тăнă. Çураки пуçланиччен чылай малтан Вăрнар, Шăхасан, Çĕрпӳ тата ытти МТС-сенче массăллă-политикăллă ĕçĕн татăклă планĕсене туса пурнăçа кĕртме тытăннă, агитаторсене тата стена хаçат редакторĕсене бригадăсем тăрăх вырнаçтарса тухнă.

Малта пыракан МТС-семпе бригадăсен опычĕ, çапла ĕнтĕ, вĕсем ĕçе тĕрĕс организацилесен, вĕсен аллинче пĕтĕм ĕçе ăнăçлăн туса пымалли пысăк майсем пуррине кăтартса парать. Анчах Сĕнтĕр, Пăрачкав, Октябрьски, Сĕнтĕрвăрри, Шăмăршă МТС-ĕсем çав майсемпе усă курма пултараймарĕç, трактор ĕçĕсен çуркуннехи планне пурнăçа кĕртеймерĕç. Пăрачкав МТС-че (директорĕ Салмин юлташ) çуракин чи хĕрӳллĕ кунĕсенче пĕтĕм тракторсенчен 50 проценчĕ ĕçлемесĕр чарăнса тăнă.

Кая юлнă МТС-сен руководителĕсем хăйсен ĕçне тĕпренех урăхлатса çĕнетме, трактор бригадисене техника тĕлĕшĕнчен пăхса тăрассине лайăх йĕркелеме тивĕçлĕ. Механиксемпе бригадирсен трактористсене, уйрăмах çамрăк трактористсене, хăйсен ĕçĕшĕн ответлă пулма хăнăхтарса пымалла. Тракторсене техника тĕлĕшĕнчен пăхса тăмалли график трактористсемшĕн çирĕп закон пулса тăрать. Кашни тракторпа кунĕн-çĕрĕн, пĕр чарăнмасăр ĕçлемелле. Кашни тракторăн хăвачĕпе туллин усă курмалла. Пур МТС-сенче те автомашинăсем çинче е урапа çинче куçса çӳрекен мастерскойсем тумалла. Унсăрăн трактор бригадисене уйхирте техника тĕлĕшĕнчен пăхса тăрассине кирлĕ пек йĕркелеме çук.

Трактор бригадисенче учетчикăн ĕçне çӳллĕ вырăна лартмалла. Учетчиксем горючие йышăнас, сыхласа усрас тата тракторсем валли валеçсе парас тĕлĕшпе, пичкесемпе савăт-сапасене, горючи ямалли хатĕрсене пăхса усрас тĕлĕшпе, бригада тăвакан ĕçе шута илес тĕлĕшпе хăйсен ĕçне тӳрĕ кăмăллăн туса пыма тивĕçлĕ. Горючипе сĕрмелли çусен кашни тумламне перекетлесси—кашни трактористпа бригадирăн тата механикăн таса тивĕçĕ пулса тăрать.

ТЫРПУЛСЕНЕ ПĂХСА ÇИТĔНТЕРЕС ĔÇЕ ЛАЙĂХ ОРГАНИЗАЦИЛЕР

ВКП(б) Центральный Комитечĕ кăçалхи майăн 25-мĕшĕнче йышăннă хăйĕн постановленийĕнче партипе совет организацийĕсене тата çĕрĕç органĕсене кăçалхи çул техникăллă культурăсене, пропашной культурăсене, тĕштырăсемпе вăрлăхлăх акнă курăксене лайăх пăхса çитĕнтерес ĕç çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхма кăтартса пачĕ. Çак ĕç колхозсемпе совхозсен çывăх вăхăтри чи ответлă задачи пулса тăрать.

Тырпул калчисене пăхса çитĕнтерес ĕç пирĕн республикăри колхозсенче уйрăмах кирлĕ. Юлашки çулсенче пирĕн хăшпĕр районсенче çумкурăкĕсене пĕтерес ĕç çине сӳрĕкрех пăхма пуçларĕç. Комсомольски районри колхозсен уйхирĕсенче армути, пиçен тата ытти тĕрлĕ çумкурăксем вăйлăн саралнă. Вĕсем ялхуçалăхне питĕ пысăк сиен кӳреççĕ. Çавăн пекех Тăвай, Кувакино, Пăрачкав тата ытти хăшпĕр районсенчи колхозсен уйхирĕсенче те çумкурăкĕ нумай ӳсет. Çакă вăл асăннă районсенчи колхозсен тырпул тухăçлăхне чылай чакарать.

Кунта çакна палăртса хăвармалла: республика Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ, çавăн пекех тата райисполкомсемпе ВКП(б) райкомĕсем партин Центральный Комитечĕ кăтартса панисенчен хăйсем валли тивĕçлĕ выводсем туман, тырпулсене пăхса çитĕнтерес тĕлĕшпе кирлĕ мерăсене йышăнман. Республикăра çуракине пуринчен малтан пĕтернĕ Вăрнар, Сĕнтĕр, Красноармейски районсенче те уйхирсене çумкурăксенчен тасатас енĕпе кирлĕ пек тăрăшни палăрмасть-ха.

Çумкурăкĕ тырпулшăн пысăк инкек пулса тăнине, çум çумлас ĕçе вăраха хăварса пынă кашни кун колхозсене питĕ хакла ларнине ăнланса илме вăхăт ĕнтĕ. Тырпулсен «ешĕл тăшманĕпе» кĕрешме пĕтĕм халăха ура çине тăратас пулать, çум çумлана çĕре колхозниксемпе совхозсенчи рабочисене пурне те кăлармалла тăвас пулать.

Чылай çуртыррисене кăçалхи çул çуркунне сухаласа акнă, çавăн пекех кĕрхи тырăсене акмалли çĕре те чылай çĕрте акас умĕн кăна сухаланă. Çавăнпа та кĕрхи тырăсемпе çуртыррисене, çавăн пекех вăрлăхлăх акнă курăксене çумкурăксенчен тасатасси уйрăмах кирлĕ ĕç пулса тăрать. Çумкурăксене иртерех çумласа пĕтерни тырпула лайăхрах ӳсме тата тырпулсене пăхса тăрас тĕлĕшпе сахалтарах ĕç вăйĕ тăкаклама май парать.

Техникăллă тата пропашной культурăсене, пахча-çимĕçсене пăхса çитĕнтерес ĕçре звено тĕп вырăн йышăнса тăрать. Çĕрĕç органĕсен руководителĕсем, ялхуçалăх специалисчĕсем колхозсене звеносене тĕреклетес, вĕсен ĕçне тĕрĕс йĕркелес тĕлĕшпе пулăшма тивĕçлĕ. Пирĕн чылай колхозсенче звено членĕсене пĕр ĕçрен тепĕр ĕçе куçарса тăрасси сахал мар пулать. Çакă вăл ĕçе сиенсĕр пуçне урăх нимĕн те кӳмест. Звеносен йышне яланлăха çирĕплетмелле. Звено членĕсемпе звеньевойсем хăйсен çĕр лаптăкĕсене лайăх пĕлсе тăма тивĕçлĕ. Звенон кашни членĕ çумкурăксемпе тата тырпулсене сиенлекен хурткăпшанкăсемпе кĕрешес тĕлĕшпе хăйĕн задачине витĕр курса тăма тивĕçлĕ.

Ĕç вăйĕ нумай ыйтакан культурăсене (йĕтĕн-кантăра, кок-сагыза, махоркăна, пахча-çимĕçсене тата ыттисене) партипе правительство звеносен уйрăм членĕсем çумне çирĕплетме сĕнеççĕ. Ĕçе çавăн пек организациленĕ чухне хушнă ĕçшĕн кашни çыннăн ответлăхĕ ӳсет, уйхирте пулăшарулăн ĕçлеме анлă майсем пулаççĕ, колхозниксем хушшинчи социализмлă ăмăртăва та лайăхрах йĕркелеме пулать.

Ĕç тухăçлăхне ӳстерес тесен, тырпулсене пăхса çитĕнтерес тĕлĕшпе ĕçлекен колхозниксем валли уйхирте пĕрле апатланассине организацилени, ачаллă хĕрарăмсене ĕçе активлăнрах хутшăнма ача яслисемпе садсем тата площадкăсем йĕркелени питĕ кирлĕ.

Пропашной культурăсене, çĕрулмипе тымарçимĕçсене пăхса çитнĕтересси çине, вĕсене апатлантарасси çине, ретсем хушшинчи тăпрана кăпкалатса çемçетесси тата сӳрелесси çине, çавăн пекех ялхуçалăх культурисене сиенлекен хурткăпшанкăсене пĕтересси çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Çакăнпа пĕрлех йăрансем çинчи, канавсенчи, çул хĕррисенчи тата акмасăр выртакан çĕрсем çинчи çумкурăксене вĕсем чечеке ларичченех çулса пăрахас тĕлĕшпе те тимлĕн ĕçлемелле.

Республикăри партипе совет тата çĕрĕç органĕсен задачи—тырпулсене лайăх пăхса çитĕнтерес ĕçе тĕплĕн организацилесе 1945 çулта вăйлă тырпул туса илесси пулса тăрать.

ÇĔРТМЕ ТĂВАССИ ТАТА ÇĔРТМЕ ПУССИСЕНЕ ПĂХСА ТĂРАССИ

Çĕртме сухине вăхăтра тата лайăх туни çумкурăксене пĕтерес, тăпрара нӳрлĕх ытларах сыхласа хăварас, çапла вара кĕрхи тырпулсен тухăçлăхне ӳстерес ĕçре тĕп вырăн йышăнса тăрать. Çĕртме сухине лайăх туни колхозсене малашнехи çулсенче çум çумлас тата ретсем хушшине кăпкалатса тасатас ĕçе çăмăллатма май парать. Çакна пурте ăнланаççĕ пулин те, республикăри нумай колхозсенче, уйрăмах Кувакино, Пăрачкав, Шăмăршă тата Улатăр районĕсенче çĕртме тăвас ĕç питĕ вăраххăн пулса пырать. Республика Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çирĕплетнĕ график тăрăх июнĕн 5-мĕшĕ тĕлне республикăра пурĕ 70.095 гектар çĕртме тумалла пулнă, çакă вăл таса çĕртмен 36 проценчĕ пулать. Тĕрĕссипе илсен, çав вăхăт тĕлне, Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн сводкисем тăрăх, çĕртме сухине пĕтĕмпе те 22.777 гектар е 11,6 процент чухлĕ кăна тунă Çапла вара республика 5 кунхи заданисене ку тĕлĕшпе пурнăçа кĕртсе пымасть. Çĕртме тăвас ĕçе вăраха тăсса пыни—килес çулхи вăйлă тырпул туса илессине пысăк хăрушлăх умне тăратать. Çĕртме тăвас ĕçе ертсе пырассине тĕпренех лайăхлатмалла. Государствăн çĕртме тумалли планне кашни колхозпа совхозрах пурнăçа кĕртмелле тăвас пулать, çав ĕçе, çуракине иртерес ĕç пекех, пысăк вырăна хумалла.

Колхозсемпе МТС-сен çĕртме тăвассине Совнаркомпа ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ кăтартнă срокрсенче пурнăçа кĕртме вăйсем çителĕклĕ. МТС-сенчи мĕнпур тракторсене тата колхозсенче ĕç выльăхĕсене халĕ пĕтĕмпех çĕртме тунă çĕре ямалла. Парти организацийĕсен çĕртме тумалли пилĕккунлăх заданисене кашни колхоз, кашни трактор бригадипе уйхир бригади мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине контроллесе тăрас пулать.

Çĕртме пусси тăпрана удобрени хывмалли чи лайăх вырăн пулса тăрать. Анчах нумай руководительсем вырăнти удобренисене хаклама вĕренсе çитмен-ха. Колхозсенчи тата колхозниксен килĕсенчи мĕнпур тислĕкпе çĕрĕк тăприне, çавăн пекех тата торфа çĕртме пуссине турттарас ĕçе организацилемелле.

Çĕртме тунă уйхирсене çу каçиччченех таса та кăпка тытмалла. Çĕртме пуссинче пĕр çумкурăкĕ те пулмалла мар. Çавăнпа та ĕнтĕ çĕртме сухине лайăх тăвасси çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхас пулать. Çĕртмене тарăн сухаламалла тата çийĕнчех сӳрелемелле. МТС директорĕсем çĕртме тунă çĕрте предплужниксемпе анлăн усă курмалла тума тивĕçлĕ. Çак ĕçре брак тăвакансене ответ тыттарас пулать.

УТĂ ÇУЛАС ĔÇ

Утă çуласси питĕ пысăк ĕç пулса тăрать. Кунта пирĕн иртнĕ çулхи йăнăшсене те шута илмелле. Утта вăхăтра çулса пуçтарса, выльăхсем валли лайăх апат хатĕрлесе хумалла. Çакăн валли, пуринчен малтан, утă çулмалли хатĕрсене, косилкăсемпе çавасене тата кĕреплесене юсас пулать. Чăвашсоюзпа промсоюзăн задачи колхозсем валли кирлĕ таран лапаткасем туса хатĕрлесси пулса тăрать. Косилкăсемпе ĕçлеме çынсене малтанах вĕрентсе хатĕрлемелле. Утă çулас ĕç пуçланиччен чылайĕшне кĕске вăхăтлă курссенче вĕрентсе кăлармалла.

Утă çулас ĕçре обезличкăна пĕтерес тата ĕç тухăçлăхне ӳстерес шутпа, улăхçарансене—бригадăсем çумне, бригадăсенче вара звеносем çумне çирĕплетмелле, ĕçре уйрăм сдельщинăпа тата вакă ушкăнсем валли тунă сдельщинăпа анлăн усă курмалла.

Утă çулас ĕçе пĕр кунлăха та кая хăварма юрамасть, мĕншĕн тесен çав ĕçре пĕр кун кая юлни те утă пахалăхне чакарать. Утă çулса государствăна парассине тырă вырма тытăначчен туса ĕлкĕртмелле.

ТЫРПУЛ ПУХСА КĔРТМЕ ХАТĔРЛЕНЕССИ

Тырпул пухса кĕртесси ялхуçалăх çулĕн чи ответлă тапхăрĕ пулса тăрать. Çав ĕçе туса иртерме вăй нумай кирлĕ. Пĕр вăхăтрах ялхуçалăхĕнче нумай тĕрлĕ ĕçсем (тыра вырасси, кĕлте турттарса капана хывасси, авăн çапасси, государствăна тырă парасси, кĕрхи тырăсем акасси, кĕрхи çĕртме тăвасси тата ытти ĕç-

(Юлашки 2-мĕш страницăра).

И. М. Чарыков юлташ доклачĕн вĕçĕ

(Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра).

сем те) пулаççĕ. Пĕр ĕç тепĕр ĕçе чăрмантармалла мар туса организацилемелле, кашни ĕçе черетпе мар, хăй вăхăтĕнче туса ирттермелле.

Мĕнпур коммунистсемпе комсомолецсене, пĕтĕм халăха çĕнĕ тырпула кĕтсе илме хатĕрленес ĕçе мобилизацилес пулать. Тырпула пĕр тăккаламасăр, хăвăрт та кал-каллăн пухса кĕртмелле. Çавăнпа та пирĕн тыра вырмалли машинăсемпе ĕç хатĕрĕсене—комбайнсемпе молотилкăсене, жнейкăсене, çавасемпе çурласене тата кĕреплесене тĕплĕн юсаса хатĕрлемелле.

Запаслă пайсем çитсе пымая пирки эпир комбайнсемпе молотилкăсене юлашки çулсенче тĕпренех юсаса пыман. Çавăнпа та комбайнсемпе молотилкăсем тата тырă вырса пухмалли ытти машинăсем кивелсе пĕтнĕ. Пирĕн çав машинăсене юсас ĕç çине питĕ тимлĕн çавăрăнса пăхас пулать. Юсав ĕçне куллен пĕлсе ертсе пымалла. МТС директорĕсемпе район руководителĕсен машинăсем юсас, запаслă пайсем тупас, кивĕ пайсене юсаса çĕнетес тата çĕнĕ пайсем тăвас ĕçре колхозсене ĕçлĕн пулăшса пырас пулать.

Комбайнсемпе молотилкăсене июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмĕшĕпех юсаса çитермелле. Июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне пирĕн 119 комбайн тата 104 молотилка юсамаллаччĕ. Тĕрĕссипе илсен, эпир çав кун тĕлне пĕр комбайн та юсаман. Ку ĕçе тĕпрепех пайлатмалла.

МТС-сен директорĕсемпе райсоветсен исполкомĕсен ялхуçалăхĕнче, учрежденисемпе предприятисенче хăйсен ĕçĕпе ĕçлемен мĕнпур комбайнерсене шута илмелле, вĕсене МТС-семпе совхозсене чĕнсе илмелле, кĕске вăхăтлăх курссенче вĕрентсе кăлармалла тата çавăнпа пĕрлех комбайнсене юсанă çĕрте ĕçлеттермелле.

Комбайнсене уйхирте лайăх ĕçлеттермелле тăвас тесен, МТС директорĕсен комбайнпа вырса пустармалли участоксене малтанах суйласа хумалла, комбайнерсене çав участоксемпе паллаштармалла. Кашни комбайнăн çапнă тырра ĕçленĕ вăхăтрах пушатмалли, выртса пулнă тырра вырса пустармалли, тĕштырă тăкăнассинчен сыхланмалли хатĕрсемпе ытти тĕрлĕ хатĕрсем пулмалла.

Ялхуçалăх машинисене юсас ĕçре колхозсене пирĕн промышленность предприятийĕсем пысăк пулăшу пама тивĕçлĕ. Вĕсен запаслă кивĕ пайсене юсамалла тата çĕнĕрен тумалла, çавăн пекех колхозсене токарьсемпе слесарьсем тата тимĕрçĕсем ярса пулăшмалла. Республикăри хăшпĕр предприятисем çав ĕç çине тимлĕн çавăрăнса пăхаççĕ. Анчах çапах та пирĕн предприятисем республикăри ялхуçалăхĕ умĕнче пысăк парăмра тăраççĕ. Ялхуçалăх машинисемпе тракторсем валли запаслă пайсем туса кăлармалли кăçалхи иккĕмĕш квартал планне предприятисем пĕтĕмпе те 25 процент чухлĕ кăна тултарнă. Çав плана пур предприятисен те пурнăçламалла.

Комбайн çине шанса, тырпул пухса кĕртмелли çăмăл машинăсем çинчен—жнейкăсемпе лобогрейкăсем çинчен манса кăякан председательсем те пур-ха пирĕн. Çав машинăсене чылай çĕрте тыра вырма тухас умĕн тин юсама тытăнаççĕ. Васкаса юсанă машинăсем вара чи хĕрӳ ĕç вăхăтĕнче стройран тухаççĕ. Пирĕн жнейкăсемпе лобогрейкăсене, çавăн пекех тырпула алăпа вырса пухмалли инвентаре те малтанах тĕплĕн хатĕрлесе хурас пулать.

Çĕрĕç работникĕсемпе колхоз правленийĕсен утă çулмалли машинăсемпе тыра вырнă çĕрте усă курасси çинчен халех шухăшласа пăхмалла. Çавăнпа та утă çулса пустарнă хыççăнах косилкăсене тырă вырма хатĕрлесе хумалла.

Çурласене шăллаттармалла, çавасене туптатса хăйраттармалла. Тыра вырса пухнă çĕрте кĕреплеллĕ çавасемпе усă курасси çине тимлĕн çавăрăнса пăхмалла.

Пĕлтĕр уйрăм районсенчи колхозсенче машинăсемпе ĕçлеме пĕлекен çынсем çук пирки, тырă вырнă çĕрте çав машинăсемпе кирлĕ пек усă курман. ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсен жнейкăсемпе тата лобогрейкăсемпе ĕçлеме халех çынсем вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла. Кашни колхозрах машиноведсен тĕплĕн вĕрентсе хатĕрленĕ кадрĕсем пулмалла.

Тырă пухса кĕртнĕ вăхăтра транспорт инвентарĕ питĕ кирлĕ пулса тăрать. Колхоз председателĕсен транспорт инвентарьне—урапасене, ридвансене, тырă турттармалли ещĕксене тата ут таврашĕсене—халех юсама пуçламалла. Транспорт е ут таврашĕ ситменнипе пĕр лаша та ĕçсĕр тăмалла ан пултăр.

Витнĕ итемсемпе авăнсене халех йĕркене кĕртме тытăнмалла: вĕсене витмелле, пĕлтĕр тырă çапнă хыççăн юлнă юлашкисенчен тасатмалла, кăмакăсене, авăнсене юсамалла, витнĕ итемсемпе авăнсем çĕнĕрен тума пуçламалла.

Колхозсен склачĕсем çинчен манма юрамасть. Колхоз руководителĕсен мĕнпур складсене халех тĕрĕслесе тухмалла, кирлĕ пулсан, вĕсене çийĕнчех юсама пуçламалла.

Колхозăн çĕрĕ аякра пулсан, ун пек вырăнта хирти стансем тумалла. Çĕрĕç органĕсен çав ыйту пирки халех тĕплĕн шухăшласа хумалла, колхозниксене çавăн пек стансем тума мобилизацилемелле, тырă вырма тухнă çĕре хирти стансем хатĕр пулмалла.

Колхозсемпе совхозсем умĕнче тырпула кĕске вăхăтра тата пĕр тăккаламасăр пухса кĕртме хатĕрленес задача тăрать. Колхозниксем хăйсем пăхса ӳстернĕ тырра пĕр пучах хăвармиччен пухса кĕртчĕр.

Чи кирли кунта—тырра вăхăтра пухса кĕртесси пулать. Комбайна мĕншĕн те пулин хута яма май пулмасан, тырра çавапа çулмалла, çурлапа вырмалла, жнейкăпа, лобогрейкăпа, косилкăпа вырмалла. Тыра вырас ĕçе анлăн туса пымалла, ку тĕлĕшпе пур майсемпе те усă курмалла.

Тырра тăккаланипе кĕрешесси мĕнпур колхозсемпе çĕрĕç органĕсен руководителĕсен ĕçĕнче тĕп вырăнта тăмалла. Колхозниксене çапла ăнлантарса памалла: тырра тăккаланине пĕтерни ĕçкунĕн хакне ӳстерет тата хамăр çĕршыва темиçе вунă пин пăт тыра ытларах илме май парать. Тырпула вăхăтра пухса кĕртнисĕр пуçне тата пучахсене обязательнăй йĕркепе пухмалла. Çакна асра тытас пулать: кашни тăваткăл метр çĕр çинче икшер пучах выртса юлни—пĕр гектар пуçне пĕр пăтран кая мар тыра çухатнине пĕлтерет.

Çапнă тырра турттарма михĕсем, шăналăксем, ещĕксем вăхăтра хатĕрлесе хумалла. Капансемпе молотилкăсем патне кĕлте турттармалли урапасем çине лайăх хупăсем сармалла. Капансене тасатнă вырăнсенче çĕç тумалла, итемсенче тăкăннă тырра кулленех шăлса пухмалла. Кашни комбайнпа кашни жнейка çумĕнче зерноуловитель пултăр. Молотилкăсем тырра тĕплĕн çапса кăлармалла пулччăр.

Колхозсенче вак ушкăнлă (звенолă) сдельщинăпа уйрăм сдельщинăна йĕркелесе ямалла. Колхозниксене кашнине уйрăм ĕç парсан, колхозниксем ытларах ĕçлеме тăрăшаççĕ, вĕсен ĕçĕ те вара тухăçлăрах пулать.

Сдельщина вăл обезличкăна пĕтерет, вăл колхознике хăйĕн вăйĕпе туллин усă курма май парать. Кашни выракана çулакана уйрăм участок уйăрса парсан çав участока вырса пĕтернĕшĕн ăна миçе ĕçкунĕ çырса парассине малтанах каласан, вăл çав участокри тырра часрах вырса пĕтерме тăрăшать. Колхозниксен пысăкрах пайĕ—тӳрĕ кăмăллă, тăрăшса ĕçлеççĕ. Çавăнпа та уйрăм сдельщинăпа ĕçлесен, колхозниксен пысăкрах пайĕ хăйсен нормисене ирттерсе тултарĕç, çапла вара тырра темиçе хут хăвăртрах вырса пĕтерĕç. Сдельщинăпа ĕçлесен, ăмăрту та чăн ăмăрту пулса тăрать, мĕншĕн тесен ун чухне кашни колхозник хăйĕн ĕçĕн результачĕсене курса тăрать, ун чухне вара малта пыракан колхозниксене уйăрса илме те кая юлакансене хистеме çăмăлтарах пулать.

Колхозниксене заданисем те пĕр кунлăх мар, темиçе кунлăх парас пулать.

Капан тунă çĕрте, тырă çапнă çĕрте тата машинăпа вырнă çĕрте вак ушкăнлă сдельщина тума юрать. заданисене вара кашни колхозник патнех çитермелле, вĕсен ĕçне тĕплĕн шута илсе пымалла, вĕсене мĕн чухлĕ ĕçленĕ тăрăх тӳлемелле. Паллах ĕнтĕ, кашни районрах уйрăм условисем пур, çавăнпа та колхозниксен ĕçне организацилес ыйтăва çав условисене кура татса памалла. Анчах та пур районсен те çакна çирĕп асра тытмалла: кашни колхозник хирте пĕтĕм вăйпа ĕçлемелле пултăр, районри руководительсем ĕç организацийĕн ыйтăвĕсене хăйсем пăхса тухчăр, ситменлĕхсене асăрхаччăр, вĕсене çийĕнчех пĕтерччĕр.

Тырпула сыхлас ĕç пысăк ĕç пулса тăрать. Кунта çакăн пек задача тăрать: колхозниксем ырă кăмăлпа тăрăшса ӳстернĕ тырра пĕтĕмпех сыхласа хăвармалла, тырпула хуралласа ĕçе кахалсемпе юлхавсем колхоз тырри патне нихăçан та пыма пултармалла мар туса организацилемелле. Тырă пухса кĕртнĕ вăхăтра тырра талăкĕпех хураллмалла, хурал тăракан постсем тумалла. Хир тăрăх юланутпа çӳресе тĕрĕслеме тӳрĕ те шанчăклă колхозниксене уйăрса хумалла. Çакăнпа пĕрлех хирсенче те, итемсенче те пушартан сыхланас ĕçе тивĕçлипе организацилемелле.

Тырра тĕрĕс шута илесси ăна сыхлас ĕçпе таччăн сыхăнса тăрать. Колхоз руководителĕсен çĕнĕ тырра тĕрĕс шута илсе пыртармалла, тырра вăрлама, салатма пăхнине çийĕнчех пĕтерсе хумалла.

ЯЛХУÇАЛĂХ ПРОДУКЧĔСЕМ ХАТĔРЛЕССИ

Государствăна тырă парасси—колхозсен чи малтан тумалли задачи пулса тăрать. Государство кашни уйăхра миçе процент тырă памаллине кăтартса панă. Çав графика кашни районăн, кашни колхозăн çирĕп пурнăçласа пымалла.

Государствăна тырă памалли плана ăнăçлăн тултарасси нумай енчен хатĕрлев пункчĕсене вăхăтра хатĕрлесе çитернинчен килет. Анчах та çак ĕç пирĕн начар пырать-ха. Заготзернон Шупашкарти. Çĕрпӳри, Вăрнарти, Етĕрнери тата Сĕнтервăрринчи пункчĕсенче техникăлла базăна хатĕрлеме халĕ те тытăнман-ха.

Заготзернон техникăлла базине хатĕрлес ĕçе ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсен тата районсемпе хула Совечĕсен исполкомĕсен хăйсен контроллесе тăмалла, складсене хатĕрлесе хурас ĕçре Заготзерно пункчĕсене кулленех пулăшмалла.

1944 çулта нумай тырра аякри пунктсенче йышăннă, çакă государствăна тырă памалли плана ăнăçлăн тултарма пулăшнă. Анчах та çав пунктсене пĕлтĕр лайăх хатĕрленмесĕр уçнă, тырра час-часах мĕнле склад тупнă, çавăнта хунă, хăш чухне çав складсем тырă усрама юрăхлă пулман. Çавăнпа та çавăн пек аякри пунктсем уçма палăртнă районсен руководителĕсем халех складсем тупма, вĕсене юсама тата вĕсем валли заведующисем тупса хума тăрăшмалла.

Тырă хатĕрлессине ăнăçлăн ирттерес ĕçре кадрсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Анчах çак ыйтупа пирĕн ĕç лайăхах пымасть-ха. Заготзерно пункчĕсене тĕрĕслемен çынсем те кĕрсе кайкаланă. ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсен Заготзерно пункчĕсене кирлĕ кадрсем тупса лартмалла.

Пирĕн республикăра çĕрулмипе пахчаçимĕçсем хатĕрлес ĕçе темиçе организаци туса пыраççĕ: Наркомторг системи, Наркомпищепром системи, спирт тата крахмал завочĕсем, маслопром, мясотрест. Çав организацисен çĕрулмипе пахчаçимĕç усрамалли складсене халех хатĕрлеме тытăнмалла, михĕсем, ещĕксем тата ытти те хатĕрлемелле, çĕрулмине типĕтме вутă хатĕрлеме тытăнмалла.

Колхозсем часах утă çулма тытăнаççĕ. Уполнаркомзагсен хăйсен аппаратне утă йышăнмалли пунктсене вăхăтра хатĕрлеме мобилизацилемелле, колхозсене Заготсено пункчĕсене чи малтан çулнă утта пама хушмалла, кашни колхоз государствăна правительство кăтартса панă срокра—сентябрĕн 1-мĕшĕччен утă парса таттăр.

Кăçал колхозсен акнă йĕтĕне, кантăрана, махоркăна тата ытти техникăлла культурăсене пăхас ĕçе нумай лайăхлатмалла. вĕсене вăхăтра пухса кĕртмелле, вăхăтра çапмалла, государствăна вăхăтра парса татмалла. Çак тĕлĕшпе пур кирлĕ мерăсене те пурнăçламалла.

ЯЛТА ПАРТИН ПОЛИТИКĂЛЛА ĔÇНЕ ТУСА ПЫРАССИ

Тырпула пухса кĕртес тата государствăна ялхуçалăх продукчĕсем пама хатĕрленес ĕçпе çыхăнса тăракан чи кирлĕ задачăсем енчен пăхсан, ВКП(б) райкомĕсемпе пуçламĕш парторганизацисен ялсенчи партин организацилле тата политикăллă ĕçне лайăхлатмалла. Вăйсене тĕрĕс вырнаçтарса тухас, партин политикăллă ĕçне хуçалăх ĕçĕпе пĕлсе çыхăнтарас, ялти анлă массăсем хушшинче социализмлă ăмăртăва тивĕçлипе организацилес ĕç çине тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Кашни парторганизацин тивĕçĕ —массăллă-политикăллă ĕçе хальхи задачăсем ыйтнă пек туса пырасси пулать.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тата ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «Ялхуçалăхне малалла аталантармалли 1945 çулхи государство планĕ çинчен» йышăннă постановленире çакна кăтартса панăçĕ: кăçал колхозсен, МТС-сен, совхозсен тĕп задачи — тĕштырăсене тата ытти ялхуçалăх продукчĕсене мĕн май килнĕ таран ытларах туса илесси пулать. Партин политикăллă ĕçне çак тĕп задачăпа сыхăнтарса туса пымалла та ĕнтĕ.

ВКП(б) райкомĕсен тата ялти пуçламĕш парторганизацисен ялти мĕнпур вăйсемпе тата майсемпе пĕлсе усă курмалла, унăн ресурсĕсемпе туллин усă курмалла, пур колхозниксене те тырпула ăнăçлăн пухса кĕртес ĕçе мобилизацилемелле. Вăрçă çакна кăтартса пачĕ: ĕççыннисен анлă массисене хутшăнтармасăр хальхи вăхăтра пĕр задачăна та пурнăçлама çук. Çавăнпа та колхозниксемпе колхозницăсем, трактористсемпе трактористкăсем хушшинче партин политикăллă ĕçне туса пыни питĕ кирлĕ ĕç пулса тăрать.

Республикăри парторганизацисем сурапкине хатĕрленнĕ тата ирттернĕ тапхăрти массăллă-политикăллă ĕçре пысăк опыт туянчĕç. Вĕсем темиçе пин лайăх агитатор хатĕрлерĕç, çав агитаторсем хăйсем кăтартуллăн ĕçлесе тата большевикла сумлă сăмахпа массăсене çуркуннехи ĕçсене лайăх туса ирттерме мобилизацилерĕç. Çав опыта пĕтĕçтерсе, çирĕплетсе хăвармалла, колхозсемпе МТС-сенче массăллă-политикăллă ĕçе кулленех туса пымалла, вырăнти агитаторсемпе беседчиксен çĕнĕ кадрĕсене хатĕрлемелле, агитколлективсене кулленех тата конкретнă ертсе пымалла, политикăллă-массăллă ĕçе ялти интеллигенципе тата ялхуçалăхĕнче малта пыракан çынсене анлăн хутшăнтармалла. Ялсенчи сутĕç учрежденийĕсен, вырăнти хаçат редакцийĕсен тата радио ĕçне тĕпрен лайăхлатмалла.

Темиçе кунтан эпир Чăвашсен Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики 25 çул тултарнине уявлатпăр. Пирĕн республикăри ĕççыннисем çак пысăк праçнике историллĕ кунсенче—совет халăхĕн гитлерла Германине хирĕç пынă Отечественнăй аслă вăрçийĕ тăшмана çĕнтернипе вĕçленнĕ условисенче паллă тăваççĕ. Ĕççыннисен патриотла çĕкленĕвĕ калама çук пысăк. Республикăн çав чаплă юбилейĕ ячĕпе социализмлă ăмăртăва тата анлăрах сарса ямалла, çак ĕçе ялта политикăллă-масăллă ĕçе анлăн сарса ярса, колхозниксене, трактористсене, комбайнерсене тата ялхуçалăхĕнчи ытти работниксене тырпул пухса кĕртес ĕçе лайăх хатĕрленме тата ăна кăтартуллăн ирттерме, кăçал вăйлă тырпул — Çĕнтерӳ тырпулĕ пухса илме мобилизацилемелле.

Жуков Маршал арми генералĕпе Эйзенхауэрпа тата Монтгомери фельдмаршалпа тĕл пулни

Берлинри Темпельгоф аэродромĕнчен ĕнер икĕ самолет çĕкленчĕç те, çӳлелле лапкăн хăпарса, хĕвелъяк еннелле вĕçсе кайрĕç. Ку машинăсемпе Совет Союзĕн Маршалĕ Г. К. Жуков, Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Я. Вышинский тата штабри генералсемпе офицерсем вĕçсе кайрĕç.

Самолет çунаттисен айĕпе Берлинăн хула тулашĕнчи пайĕсем, Потсдам кварталĕсем, Германири пĕчĕк хуласемпе ялсем вĕлтлетсе тăрса юлаççĕ. Пур çĕрте те нумаях пулмасть пулса иртнĕ çапăçусен паларăççĕ. Аялта Эльба шывĕ ансăр хăю пек тăсăлса выртать, ун тепĕр енче —тăшмана хирĕç Америка çарĕсем кĕрешнĕ территори сарăлса выртать.

Сывлăш карапĕн командирĕ Смирнов подполковник çула Майн çинчи Франкфурт хули еннелле тытать. Пĕр сехĕт те 40 минут вĕçнĕ хыççăн самолета Америка истребителĕсем хирĕç тухса кĕтсе илеççĕ. Вĕсем саламласа вĕçсе çавранаççĕ те хĕвеланăç еннелле каяççĕ.

Вĕçевĕн юлашки тапхăрĕнче Франкфурт аэродромĕн ешĕл симĕс уçĕ курăнса каять. Унта совет хăнисене кĕтсе илме хатĕрленсе тăнă союзниксен çарĕсем тата союзлă державăсен ялавĕсем курăнаççĕ.

Сехĕт стрелки 12 тĕлне çитсен, малти самолетăн ураписем çĕре перĕнеççĕ. Малта çул кăтартса пыракан «Виллис» хыççăн пирĕн самолет тĕл пулма хатĕрленнĕ вырăна çитсе чарăнать. Самолет алăкĕсем витĕр тупăсемпе пенĕ сасă илтĕнет. Совет Союзĕн Германири оккупациллĕ çарĕсен главнокомандующине Жуков Маршала Америка çарĕсем çакăн пек салют парса саламласа Майн çинчи Франкфурт хулинче кĕтсе илеççĕ.

Аэродромра Жуков Маршала, Вышинский юлташа тата совет генералĕсемпе офицерĕсене Эйзенхауэрăн штаб начальникĕ Беделл Смит генерал-лейтенант кĕтсе илет. Вăл Жуков Маршала хисеплĕ хуралăн парадне йышăнма сĕнет. Оркестр Совет Союзĕн тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен государство гимнĕсене каласа парать. Америкăпа Британи çарĕсен пĕрлештернĕ хисеплĕ хуралĕн начальникĕ Розенфельд полковник Жуков Маршала хăйне кĕтсе илме хатĕрленĕ çарсене йĕркелесе тăратни çинчен рапорт парать.

Совет Союзĕн, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тата Великобританин ялавĕсем патĕнче, Пĕрлешнĕ нацисен пĕрлĕхне кăтартаканскерсем патĕнче, Жуков Маршал хисеплĕ хурал тата союзниксен çарĕсен хăйне кĕтсе илекен офицерĕсене кĕске сăмах калать:

«Пĕрлешнĕ нацисем гитлерла Германие çĕтнерни питĕ пысăк та пархатарлă ĕç пулса тăрать. Союзниксен çарĕсемпе Хĕрлĕ Çар этемлĕхе гитлерла пусмăрлăхран тата Германи вăрçă пуçласа ярас хăрушлăхран ĕмĕрлĕхех хăтарчĕç.

Эпĕ—Эйзенхауэр генералăн хăни — Сире хавасланса çапла калатăп: фашизма эпир хальхи вăхăтри чи аслă çынсем—Рузвельт, Сталин, Черчилль—пĕр шухăшлă пулса ĕçленине пула. Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен, Совет Союзĕн тата Великобритани халăхĕсем туслă пулнине пула çĕнтертĕмĕр. Совет Союзĕпе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем хушшинчи туслăха сыхласа тăрас ĕçре США-н хальхи президенчĕ Трумэн çав тери пысăк вырăн йышăнса тăнине палăртса хăварасшăн.

Анлă çапăçусене ертсе пырас тĕлĕшпе Сирĕн Верховный Главнокомандующи арми генералĕ Эйзенхауэр питĕ паллă çитĕнӳсем турĕ. Вăл союзниксен çарĕсене çав тери ăста ертсе пычĕ.

Паян, Совет правительстви хушнипе тата Сталин Маршал хушнипе, Эйзенхауэр генерала тата унăн талантлă юлташне Монтгомери фельдмаршала Совет Союзĕн чи аслă çар орденне—«Çĕнтерӳ» орденне пама тӳрĕ килнĕшĕн эпĕ питĕ савăнатăп».

Жуков Маршал сăмах каланă хыççăн Америкăпа Англи çарĕсем чаплăн утса иртеççĕ. Пехотинецсем—союзниксен çарĕсен представителĕсем—йĕркеллĕ утса пыраççĕ. Совет Союзĕн, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тата Великобританин ялавĕсене йăтса иртеççĕ. Чи юлашкинчен оркестр иртсе каять. Парад пĕтрĕ. Жуков Маршал, Вышинский юлташ, Варенников генерал-лейтенант, Васильев генерал-лейтенант тата вĕсемпе пĕрле пынă офицерсем машинăсем çине ларăççĕ те Франкфурт урамĕсем тăрăх союзниксен Европăри экспедициллĕ çарĕсен Верховный главнокомандующи штабне каяççĕ, вĕсене çăмăл бронеавтомобильсем хисеплĕн хуралласа пыраççĕ.

Машинăсем каймалли çул тăрăх, Франкфурт урамĕсенче американецсемпе акăлчансен салтакĕсем, унтер-офицерсемпе офицерсем йĕркеленсе тăнă. Çул çинчех танксем тăраççĕ, вĕсен экипажĕсем хăйсен боевой машинисем умĕнче йĕркеленсе тăнă. Союзниксен пехотинецĕсем, мотоциклисчĕсем, танкисчĕсем Жуков Маршала тата унпа пĕрле пынă ытти çынсене саламлаççĕ.

Арми генералĕн Эйзенхауэрăн пысăк кабинечĕ. Союзниксен Европăри экспедициллĕ вăйĕсен главнокомандующийĕ Эйзенхауэр Жуков Маршала ăшшăн саламлать. Вĕсем кĕске вăхăт хушшинчех пĕр-пĕрине иккĕмĕш хут тĕл пулаççĕ. Эйзенхауэр кабинетĕнче маларах çитнĕ Монтгомери фельдмаршал, авиацин главнăй Маршалĕ Теддер, американецсемпе акăлчансен генералĕсем пур. Эйзенхауэр генерал Жуков Маршала Баррou адмиралпа, авиаци маршалĕпе Гаррисpa, авиаци маршалĕпе Кеннигхэм сэрпа, Америка çарĕсен 6-мĕш арми группин командующийĕпе Деверс генералпа, Черчиллĕн çар кабинечĕн начальникĕпе Исмей генералпа паллаштарать.

Жуков Маршал союзниксен çарĕсен паллă полководецĕсемпе пĕр 20 минута яхăн кăмăллăн калаçать. Жуков Маршал Эйзенхауэр генерала тата Монтгомери фельдмаршала — çĕнтернĕ державăсен представителĕсем Германи паранни çинчен тунă декларацие алă пуснине кăтартакан фотоӳкерчĕксем парать. Çавăн пекех тата Монтгомери фельдмаршала Жуков Маршал Англи фельдмаршалĕ Рокоссовский Маршалпа тĕл пулнине кăтартакан фотоӳкерчĕксен альбомне парать.

Эйзенхауэр генералпа Монтгомери фельдмаршал, Германи паранни çинчен тунă Декларацие алă пуснă чухне тĕл пулнине ĕмĕрлĕхе палăртса хăварас тесе, Жуков Маршала хăйсен фотоӳкерчĕкĕсене параççĕ. Фотоӳкерчĕкĕсен тепĕр енче Эйзенхауэр генералпа Монтгомери фельдмаршал: «Сума суса Дуайт Д. Эйзенхауэр. Б. Л. Монтгомери. 10/VI—45» тесе çыраççĕ.

Хисеплĕ шăплăхра Жуков Маршал ССР Союзĕн Верховный Совет Президиумĕн Указне вуласа парать. Вăл Указра Эйзенхауэр генерала тата Монтгомери фельдмаршала пысăк çапăçусем туса ирттерес ĕçре çав тери чаплă çитĕнӳсем тунăшăн тата çав çапăçусене пула вара Пĕрлешнĕ нацисем гитлерла Германие çĕнтернĕшĕн «Çĕнтерӳ» орденсем парса наградăласси çинчен каланă.

Совет Союзĕн полководецсене паракан чи аслă орденĕ—«Çĕнтерӳ» орденĕ, бриллиантсемпе илемлетнĕскер, ялтăртатса çуталать. Жуков Маршал ăна арми генералне Эйзенхауэра парать. Совет çарĕсен чапа тухнă полководецĕ Америка çарĕсен полководецне хытă алă чăмăртать.

— Аслă награда илнĕ ятпа Сире чунтан саламлатăп,—тет Маршал.

Эйзенхауэр генерал Г. К. Жукова тав туса çапла калать:

— Совет Правительстви çав тери пысăк наградине илнĕшĕн савăнатăп. Çак ордена Жуков Маршал аллинчен илнĕшĕн тата ытларах савăнатăп.

Унтан Жуков Маршал «Çĕнтерӳ» орденне Монтгомери фельдмаршала парать. Англи çарĕсен полководецне чĕререн саламлать. Фельдмаршал хĕрӳллĕн тав тăвать. Совет Союзĕн, Англин тата Америкăн генералĕсем награда илнисене саламлаççĕ.

Эйзенхауэр кабинетне пухăннă çынсем усă терраса çине тухаççĕ. Унта гитлерла Германи çарĕсене хирĕç пынă вăрçăра паттăррăн çапăçнипе чапа тухнă Америкăпа Англи офицерĕсемпе генералĕсене совет наградисене памалла. Эйзенхауэр генерал Жуков Маршала наградăланисемпе паллаштарать. Хĕрлĕ пустав витнĕ сĕтел çинче Хĕрлĕ Ялав орденĕсемпе «За боевые заслуги» медальсем выртаççĕ.

Совет Союзĕпе ют çĕршыв фотокорреспонденчĕсем тата киноператорĕсем çак мухтавлă самапта пленка çине ӳкерсе илеççĕ.

— Совет Правительстви, — тет Маршал Жуков,—Америкăпа Англи çарĕсен офицерĕсемпе генералĕсен уйрăмах палăрнă ĕçĕсене шута илсе, çапăçура палăрнă çынсене Совет Союзĕн боевой орденĕсемпе медалĕсене парса наградăлама хушрĕ.

Америкăпа Англи офицерĕсем Хĕрлĕ Ялав орденĕсемпе «За боевые заслуги» медальсем илеççĕ.

Жуков Маршал награда илнисене кашниннех ăшшăн саламлать.

Юлашки наградăсене панă вăхăтра сывлăшра темиçе çĕр авиамотор шавĕ илтĕнсе каять. Терраса çинчи çынсем пĕлĕт çинелле пăхаççĕ. Янкăр тӳпере боевой истребительсен ушкăнĕсем пĕрин хыççăн тепри вĕçе-вĕçе иртеççĕ. Хăйсен сывлăшри стройне пăсмасăрах, вĕсем пĕр самантлăха терраса тĕлнелле аялалла вĕççе анаççĕ те тепĕр самантрах çӳлелле вĕççе хăпарса каяççĕ. Истребительсем хыççăн батам бомбардировщиксем килсе тухаççĕ. Вĕсене союзниксен çарĕн çапăçусенче писнĕ летчикĕсем, Германин вăрçă объекчĕсене питĕ ăста аркатнăскерсем тытса пыраççĕ. Çак сывлăшри нумая пынă парад вăхăтĕнче тӳпе чăннипех ĕнтĕ тĕрлĕ йышши самолетсемпе тулса ларчĕ. Совет хăнисене хисеплесе, союзлă державăсен сывлăш флочĕ 20 минут хушши хăйĕн вăй-хăватне кăтартса пачĕ.

Сывлăшри парад хыççăн арми генералĕ Эйзенхауэр Жуков Маршала, Вышинский юлташа тата вĕсемпе пынă çынсене кăнтăрлахи апата чĕнет. Офицерсен столовăйĕнче пысăк залра Англин, Америкăн тата Совет Союзĕн генералĕсемпе офицерĕсем пухăннă. Эйзенхауэр генерал çапла сăмах калаçа черкке çĕклет:

— Çак сĕтел хушшине,—тет вăл, — виçĕ аслă державăн представителĕсем пухăннă. Эпĕ çак нацисен сулпуçĕсемшĕн — Сталин Маршалшăн, Черчилльшĕн, Трумэншăн, вĕсен вăрăм та хаваслă пурнăçĕшĕн черкке çĕклетĕп.

Жуков Маршал сăмах калать:

— Вăрçăн чи пысăк йывăрлăхне аслă вырăс халăхĕ хăй çинче чăтса ирттернине пĕтĕм тĕнче пĕлсе тăрать. Пирĕн çĕршыва тăшман пуринчен ытла аркатса хăварчĕ. Мĕнпур йывăрлăхсемпе жертвăсене пăхмасăр, пирĕн халăх, пирĕн çар йывăр вăхăта чăтса ирттерчĕç çеç мар, нимĕç оккупанчĕсене пирĕн Тăван çĕршывран хăваласа кăларчĕç çеç те мар, вĕсем фашистла Германин хĕçпăшаллă вăйĕсене тĕппипех аркатса тăкрĕç те Берлин çине Çĕнтерӳ ялавĕ йăтса лартрĕç. Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Великобритани халăхĕсем Совет Союзĕн халăхĕсене лайăх пулăшса пычĕç, пирĕн халăх çав пулăшăва тивĕçлипе хакларĕ. Эпĕ тӳрĕ кăмăлпа, салтак пек, пурне те çапла калатăп: кашшăн мирлĕ самана хаклă, вăл яланах çакна пĕлсе тăтăр: Хĕрлĕ Çар мир ĕçне, прогресс ĕçне малашне те иртнĕ çапăçусенчи пекех паттăррăн, хăюллăн, мухтавлăн хӳтĕлесе сыхласа пырĕ.

Юлашкинчен Жуков Маршал Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен, Великобританин халăхĕн ячĕпе тата вĕсен государство деятелĕсен сывлăхĕшĕн черкке çĕклет.

Монтгомери фельдмаршал ура çине тăрать те шăппăн та лăпкăн сăмах калама тытăнать:

— Вырăс халăхĕпе Англи халăхĕ çĕнтерӳ ĕçне хăйсен вăй-хăватне хучĕç, çав çĕнтерĕве тума пултарчĕç. Великобритани королĕ унăн Величестви Жуков Маршала аслă орденпа, Мунча орденĕпе наградăлама йышăнни çинчен пĕлтерессипе питĕ савăнтарать.

Жуков Маршал хăйне чыс тунăшăн тав тăвать.

Çакăн хыççăн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Я. Вышинский юлташ, Мерфи посол, Кирк Патрик сэр, авиацин главнăй маршалĕ Теддер сăмахсем туса калаççĕ.

Авиацин главнăй маршалĕ Теддер мир тăвас тĕлĕшпе те, вăрçăра пĕрле çапăçса тунă пысăк çитĕнӳсем пекех, чаплă çитĕнӳсем тăвассине ĕнентерсе каланине хирĕç Вышинский юлташ çапла ответ парать:

— Эпĕ Теддер маршалăн сăмахĕпе йăлтах килĕшетĕп. Анчах ман çакна палăртас килет. Вăрçăччен дипломатсем пăнăшсем туман пулсан, тен, вăрçă хирĕçсенче те çĕнтерӳ тума май килмен пулĕччĕ. Эпĕ хамăр вăхăтри полководецсен вăрçăри çитĕнĕвĕсем умĕнче пуç таятăп, анчах çак çитĕнӳсем дипломатсене çĕнĕрен йăнăшсем ан тутарччăр, тетĕп.

Хăйĕн сăмахĕн юлашки пайĕнче Вышинский юлташ миршĕн черкке çĕклет.

Апатлану вĕçĕнче Америка артисчĕсем концерт кăтартрĕç.

Унтан татах Жуков Маршал сăмах калать. Хăйĕн сăмахĕнче вăл Эйзенхауэра саламлать.

— Эйзенхауэр генерал,—тет Маршал Жуков,—союзниксен экспедициллĕ çарĕсене пĕрлештерсе, вĕсене гитлерла Германин çарĕсене çĕнтересси патне илсе пыма пултарчĕ. Эпĕ Эйзенхауэр генералшăн черкке çĕклетĕп. Вăл ăста та пултаруллă ертсе пынине пула, союзниксен экспедициллĕ çарĕсем çав тери пысăк çĕнтерӳсем турĕç. Эпĕ Эйзенхауэр генерал ăста ертсе пынипе пулса иртнĕ пур операцисене те хавхаланса асăрхаса пытăм. Ку ĕçре пурне те малтанах курмалла, малтанах шутласа хумалла пулнă. Америка халăхĕн ывăлĕн — Эйзенхауэр генералăн таланчĕ ĕнтĕ шăпах та малашнехине курма пултарнинче палăрчĕ. Пирĕн совет офицерĕсемпе генералĕсем Эйзенхауэр ертсе пынипе пулса иртнĕ операцисене хавхаланса асăрхаса пычĕç, вĕсене халĕ тĕплĕн вĕренеççĕ.

Каллех ура çине Эйзенхауэр генерал тăрать. Хăйĕн сăмахне вăл Жуков Маршала калать:

— Жуков Маршал,—тет Эйзенхауэр генерал, — манăн ĕçе питĕ пысăк хак пачĕ. Манăн нумай советниксем, лайăх генералсемпе офицерсем пулнине уйрăмах асăрхаттарас килет. Хамăн ĕçсемшĕн эпĕ пуриншĕн те вĕсене тав тăватăп. Çав çынсем йывăр вăхăтра та, лайăх вăхăтра та ĕçлерĕç, мана пăрахса каймарĕç. Халĕ вĕсенчен хăшне те пулин уйрăмăн палăртса кăтартма йывăр, анчах эпĕ пĕлетĕп: вĕсем халĕ пурте мир тăвасшăн. Вĕсем халĕ çитес çул тыр-пула шăхтерсем лайăхрах пуранмалла пултăр тесе, фермерсем ытларах кукуруза пухса кĕмелле пултăр тесе тăрăшаççĕ. Европа пирĕншĕн таса çĕршыв пулнă, вăл пире хакла ларчĕ. Пирĕн кирек епле пулсан та ăна çăлса хăвармаллаччĕ, эпир ăна çăлса хăвартăмăр. Пирĕн халăхăн чĕринче Жуков ячĕ хастарлăхпа паттăрлăха кăтартакан ят пулса тăрать. Жуков Маршалшăн черкке çĕклеме пултарнипе эпĕ хамшăн питĕ пысăк чыс вырăнне хуратăп.

5 сехет те 30 минутра Жуков Маршал тата унпа пĕрле пынă çынсем союзниксен Европăри экспедициллĕ вăйĕсен Верховный Главнокомандующийĕн штабĕнчен тухаççĕ те Эйзенхауэр генералпа пĕрле аэродрома каяççĕ. Кунта татах хисеплĕ хурал йĕркеленсе тăнă. Салют сассисем илтĕнеççĕ. Оркестрсем государство гимнĕсене калаççĕ. Тепĕр 15 минутран совет самолечĕсем çĕр çинчен хăпса çĕкленеççĕ те Берлин еннелле çул тытаççĕ.

Б. АФАНАСЬЕВ.

Июнĕн 10-мĕшĕ. (**ТАСС спецкорĕ**).

Берлин — Майн çинчи Франкфурт — Берлин.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн 2—89, секретариатăн — 4—26, пропаганда пайĕн — 2—89, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленность пайĕн — 3—97, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, рабсельнкорсен пайĕн — 0—67, издательство конторин — 0—23.

НТ 00133

Типография № 1 Управлени полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000